28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРĔН 4 ЫТЛАРИКУН 235 (6986) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховный Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Лайăх лаша—колхоз чапĕ

Пирĕн ялхуçалăхĕнче тракторсем, автомашинăсем тата ытти машинăсем те йышлă ĕçлеççĕ. Анчах та колхозри мĕнпур ĕçре лаша калама çук пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн республикăра лашана лайăх пăхса усракан колхозсене çĕршер илсе кăтартма пулать. Лашана юратса пăхакан, обезличкăна пĕтернĕ колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тăваççĕ, государство умĕнчи парăмсене те срокчен татаççĕ. Лаша артель хуçалăхĕнче пур ĕçе те татса паракан паха вăй пулса тăрать.

Отечественнăй аслă вăрçăн йывăр çулĕсенче пирĕн нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар валли лашасем панă пулин те, колхозри лашасен шутне те чакармарĕç, лаша ĕрчетмелли плана çулран-çулах тултарса пычĕç. Кăçал республикăри нумай колхозсем лаша ĕрчетмелли плана ăнăçлăн тултарчĕç. 1945 çулта пирĕн колхозсем, 1944 çулпа танлаштарсан, 2.100 тиха ытларах пăхса çитĕнтернĕ. Кăçалхи 10 уйăх хушшинче лашасен шучĕ 1.610 пуç ытла ӳснĕ. Красноармейскипе Тăвай районĕсем лашасен шутне планпа пăхнинчен 5,9 процент, Канаш районĕ 5,8 процент, Сĕнтĕр районĕ 5,7 процент ирттерсе тултарнă.

Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз лашасен шутне кăçал 20 процент, Сĕнтĕр районĕнчи «Идея» колхоз 25 процент ытла ӳстернĕ. Элĕк районĕнчи «Труд» колхозра 10 кĕсререн 10 тиха илсе, вĕсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Çакăн пек паха та мухтавлă тĕслĕхсем татах та илсе кăтартма пулать.

Анчах та лаша ĕрчетес ĕç республикăра, ытти выльăхсене ĕрчетес ĕçрен юлса пырать-ха. Ноябрь уйăхĕ тĕлне республикăри 14 район кăна лаша ĕрчетмелли плана тултарнă. Çавна май республика та лаша ĕрчетмелли плана тултарайман. Уйрăмах лаша ĕрчетес ĕç Пăрачкав, Первомайски, Комсомольски, Шăмăршă, Улатăр районĕсенче начар пырать. Асăннă районсем лаша ĕрчетмелли государство планне 85—92 процент таран кăна тултарнă. Хĕрлĕ Чутай районĕ те лаша ĕрчетес енĕпе чăтма çук начар ĕçлет. Кунта кăçал пурĕ те 210 тиха кăна çитĕнтернĕ. Районра кăрчанкă чирне халĕ те пĕтермен. Лашашăн конюхсем те, колхоз председателĕсем те ответлăха туймаççĕ. Кĕтӳри тата витери лашасене кирлĕ пек сыхламаннине пула кунта кăçал 15 лашана кашкăр тытнă. Лашасемпе усă курас тата вĕсене пăхас ĕçре чăтма çук пысăк йĕркесĕрлĕхсем тĕл пулаççĕ. Çак районри «Авангард» колхозра сентябрь уйăхĕнчен пуçласа 9 лаша вилнĕ. Кунта кăçал 12 кĕсререн 3 тиха кăна илнĕ.

Мĕнрен килеççĕ-ха çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем? Вĕсем пĕтĕмпех конюхсенчен тата колхоз лашисемпе ĕçлекенсенчен килеççĕ. Район руководителĕсем колхозсенчи лашасемпе тĕрĕс усă курнине, вĕсене йĕркеллĕ пăхнине контроллесе тăмаççĕ. Лашасене мĕнле пăхса мĕнле усă курнине тĕрĕслекен государство комиссийĕсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Лаша ĕрчетес ĕç çине çиелтен, çăмăлттайла пăхакан колхоз председателĕсене ответ тыттармаççĕ. Лаша çине тискеррĕн, чунсăрла пăхакансене суда парса айăпламаççĕ.

Етĕрне районĕнчи «Красноармеец» колхозра кăçал 17 лаша, вăл шутра ăратлă кĕсре вилнĕ. 22 кĕсререн 3 тиха кăна илнĕ. Çакăн пек преступление текех чăтма пулать-и-ха? Паллах, çук. Çак преступление тунă тата ăна тăвасси патне илсе çитернĕ колхоз руководителĕн уголовнăй йĕркепе ответ тытмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх, лашасене мĕнле пăхнине тата вĕсемпе мĕнле усă курнине уйăхне пĕр хутран кая мар тĕрĕслемелле. Çакна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыракан районсем лаша ĕрчетес ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç. Калас пулать, Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Первомайски, Етĕрне, Октябрьски, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенче лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслекен комиссисем 3—4 уйăх хушши ĕнтĕ ĕçлемеççĕ.

Лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслекен комиссисен кашни районрах ĕçе тытăнмалла, çак ĕçе пĕтĕмпех вырăнти колхозниксен анлă массине явăçтарса туса пымалла. Тĕрĕслӳре тупнă пур çитменлĕхсене те пĕтерме чи кĕске срок парса, ăна пурнăçланине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла, айăплисене пĕр хĕрхенмесĕр ответ тыттармалла.

Лашана пăхакан конюхпа лашапа усă куракан ездовой лаша сывлăхĕшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсен лашана юратса пăхмалла, ăна куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла. Анчах та уйрăм колхозсенче çак ĕçре вара çитменлĕхсем сахал мар-ха. Октябрьски районри «Коммунист» колхозра ездовой Антонина Александрова вăрман хатĕрлеме кайсан, пĕр çул хушшинче икĕ лаша вĕлернĕ. Çакă ĕнтĕ çĕршыв умĕнче пысăк айăпа кĕни пулать.

Лашасене тĕрĕслекен комиссисен тĕрĕслев итогĕсем çинчен колхоз правленийĕнче каласа памалла, çитменлĕхсене пĕтерме мĕнпур колхозниксене мобилизацилемелле. Унсăр пуçне, райсовет исполкомĕнче тата ВКП(б) райкомĕнче те отчет туса памалла.

Лашасем валли кашни колхозрах ăшă витесем тумалла, вĕсене яланах тислĕкрен тасатса тăмалла, витере çирĕп йĕрке пулмалла. Колхозри лашашăн чăн малтанах колхоз председателĕ ответлă пулса тăрать. Çавăнпа та вăл ирĕк памасăр, лашапа никам та усă курма пултараймасть.

Лашасем валли кашни колхозрах çителĕклĕ таран тырă, сĕтеклĕ апат, чи лайăх утă-улăм уйăрмалла. Лаша апатне перекетлĕ тыткаламалла. Лашасене тăрантарни кăна сахал, вĕсене вăхăтра шăвармалла, тасатмалла, кӳлсе çӳрекен инвентарьсем йĕркеллĕ пулмалла. Лашасене кирлĕ утă-улăма вите çывăхĕнче тытмалла, вăл апатăн тирпейлĕхĕшĕн тата перекетлĕхĕшĕн конюхсемпе лаша фермин заведующийĕ ответлă пулса тăраççĕ.

Чирлĕ лашасене сыватма мĕнпур ветеринарсене мобилизацилес пулать. Вăйсăр тата ырхан лашасене ĕçрен хăтармалла, лайăхрах апат çине тăратмалла. Ĕçрен хăтарнă лашасене мĕнле пăхнине яланах тĕрĕслесе тăмалла. Пĕтĕ кĕсресене пăхса усрасси хальхи вăхăтра чи ответлă та паха ĕç. Кĕсре хăм пăрахнă тĕслĕхсем кăçал та чылай пур. Кĕсре хăм пăрахнăшăн конюх кăна мар, колхоз председателĕ те ответлă. Зоотехниксемпе ветеринарсем кăтартса панă тăрăх, пĕтĕ кĕсресене ĕçрен хăтармалла, вĕсене пăхма колхозăн чи шанчăклă та чи тăрăшакан конюхсене хушмалла.

Кашни колхозрах лашасене лайăх пăхнăшăн хавхалантармалли майсене, ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырас пулать.

Лайăх лаша—колхоз чапĕ, колхозăн пуянлăхĕ. Лаша лайăх пулни, колхозри пур тĕрлĕ ĕçĕн ăнăçлăхне те татса парать. Лашасене пăхакан конюхсем, лашапа ĕçлекенсем хăйсене шанса панă лашашăн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса ĕçлемелле. Колхозри лашасен сывлăхĕшĕн кашни колхозникăн тăрăшмалла. Лаша пăхакансен мăнтăр та вăйлă лашашăн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Сталинла Конституци кунĕ ячĕпе çĕнĕ çĕкленӳ

КАНАШ. Хулари промышленность предприятийĕсемпе артельсем тата чугун çул çинче ĕçлекенсем Сталинла Конституци кунне производствăра çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илесси шĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вагонсем юсакан заводра Сталинла Конституци кунне кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, агитаторсем рабочисем хушшинче «СССР Конституцийĕ—тĕнчери чи демократиллĕ конституци» темăпа каласусем ирттереççĕ. Нумай рабочисем çак кунсенче уйрăмах тухăçлă ĕçлесе, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Чугун шăратакан цехри чи лайăх стахановецсем: Н. Дяченко, В. Дмитриев тата И. Бойцов формовщиксем çак кунсенче рекордлă ĕçсем турĕç. Норма тăрăх кунне 4—5 вагон бугĕ туса кăлармалла пулсан, Дяченко юлташ кунсерен 24—25 буг туса кăларать. Дмитриевпа Бойцов стахановецсем те куллен 22—23 буг туса кăлараççĕ.

Вагон кустăрмисем тăвакан цехри Тимофеев юлташ çак кунсенче хăйĕн нормине кулленех 500 процента çити тултарса пырать.

Чугун çул çинче ĕçлекенсем те пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Маневр диспетчерĕ Мансуровпа станци дежурнăйĕ Корытин сменинче ĕçлекенсем Сталинла Конституци кунне кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, пур тĕрлĕ заданисене те ирттерсе тултарма обязательство илнĕ. Халĕ вĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Вырăнта çӳрекен вагонсене нормăпа кăтартнинчен 15 сехет сахалтарах пушă тăратнă, транзитлă вагонсене 6—7 сехет сахалтарах пушă тытнă.

Уйрăмах поездсене йĕркелесе яракансем Петровпа Иванов юлташсем, вагонсене çыхăнтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсем Бадановпа Евсеев тата старши стрелочник Евдокимов юлташ лайăх ĕçленĕ. Вĕсене станци начальникĕ лайăх ĕçленĕшĕн пурне те тав тунă.

М. ВАСИЛЬЕВ.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

ЧУРАЧĂК. Ямаш ял Советĕнче суйлавçăсене суйлав Положенине ăнлантарас ĕç аванланса пырать. Ял Советĕнче пурĕ 6 колхоз, кашни колхоз çумнех уйрăм агитаторсем çирĕплетнĕ. Агитаторсем пулса Ямашри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем тата 3-мĕш Вăрманкассинчи пуçламăш шкул учителĕсем ĕçлеççĕ. Пур колхозсенче те суйлав Положенине ăнлантармалли занятисем пулса иртеççĕ. Занятисенче хуçалăх ĕçĕсене вĕçлессипе çыхăнтараççĕ. Нумаях пулмасть «Малти Ямаш» колхозра М. Е. Ефимова учительница заняти ирттерчĕ. Занятире 100 çынна яхăн пулчĕ. Хĕрлĕ Çартан таврăннă П. Егоров юлташ пирĕн суйлав чи демократиллĕ суйлав пулса тăни çинчен каласа пачĕ. Кунсăр пуçне В. Андреев, В. Митрофанов комсомолецсем суйлав Положенине килĕрен çӳресе ăнлантараççĕ.

А. ИВАНОВ.

М. И. КАЛИНИН ЮЛТАШ

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIV-мĕш Пленумĕн 1945 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тухса каланă сăмах

Юлташсем! — Ленинла Комсомолăн Центральный Комитечĕн членĕсем, комсомолăн облаçсенчи организацийĕсен представителĕсем, Мускав организацийĕн активĕсем!

Паян Ленинла Комсомола чи пысăк награда—Ленин орденĕ панă. [illegible]

[illegible] татах та лайăхрах, татах та активлăнрах кĕрешессе шанса тăратăп эпĕ.

Юлташсем, Совет правительстви çамрăксен коммунистла союзне виççĕмĕш хут ĕнтĕ наградăсем парса палăртать. Виççĕмĕш хут ĕнтĕ пирĕн генилле çулпуç Сталин юлташ комсомолăн халăх умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçне питĕ пысăка хурса хаклать.

Пĕрремĕш наградăна комсомол граждан вăрçине активлăн хутшăннăшăн, пирĕн халăх Совет влаçĕшĕн кĕрешнĕ чухне, илнĕ. Çав çулсенче комсомол революциллĕ çамрăксенчен вуншар пин çынна Колчакпа Деникина хирĕç, Юденича хирĕç, белополяксемпе Врангеле хирĕç кĕрешме ăнăçлăн мобилизациленĕ. Çав çамрăксем, большевиксен партийĕн ялавĕ айĕнче паттăрла ĕçсем туса, хăйсем Совет влаçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕç, комсомол пуç пулса тăнипе, вĕсем Совет влаçне тĕреклетессишĕн, хамăрăн çĕнтерӳшĕн ăнăçлă кĕрешсе пычĕç.

1931 çулта, пĕрремĕш пилĕкçуллăх планне пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, правительство комсомола çав тери пысăк ĕçсемшĕн, хастарлăхшăн, социализмлă ăмăртăва аталантарса пынăшăн, парти ертсе пынипе вăл пĕрремĕш пилĕкçуллăх планне тултарас тесе вăя хĕрхенмесĕр кĕрешнĕшĕн, унăн активлăхĕшĕн — ытти çынсене те ĕçе хĕрӳллĕн хутшăнма хавхалантаракан активлăхшăн çĕнĕрен наградăларĕ. Комсомола ун чухне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăланă. Халĕ эпĕ сире виççĕмĕш орден патăм. Çак орденпа, Ленин орденĕпе, комсомола вăл Совет Союзĕн гитлерла Германие хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçинче Тăван çĕршыв умĕнче тава тивĕçлĕ паллă ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăма вĕрентес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунăшăн наградăланă. Комсомола çав чи пысăк наградăна парса, правительство Тăван çĕршывшăн пынă аслă кĕрешӳре, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче те, çавăн пекех тылра та,—фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче комсомол тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунине палăртрĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, комсомола унăн Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн панă наградăсем çакна кăтартса параççĕ: комсомол—пирĕн партин шанчăклă помощникĕ хутшăнса ĕçлемен ĕç пĕр ĕç те çук.

Юлташсем, пирĕн правительство мĕнле те пулин организацине, мĕнле те пулин çынсене наградăлать пулсан, вăл яланах халиччен мĕн тунине кăна мар, малашнехи ĕçе те асра тытать. Мĕнле задачăсем тухса тăраççĕ-ха халĕ комсомол умне? Комсомолăн ялавне çĕнĕ çитĕнӳсемпе [illegible]

[illegible] хăйĕн куçĕпе курнă кашни çыншăн, хамăрăн çĕршыва малалла тĕреклетсе пырас ĕç мĕн тери кирлĕ ĕç пулса тăнине пĕтĕмĕшпех ăнланса илнĕ кашни çыншăн çакă вăл паллă.

Эпĕ çакна шанса тăратăп: комсомол, производствăллă çĕнĕ задачăсене пурнăçа кĕртме çамрăксене мобилизацилесе, çĕнĕрен миллионшар çамрăк патриота, Тăван çĕршыва, хамăрăн партине, Сталин юлташа пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăракан миллионшар патриота пăхса çитĕнтерĕ.

Эпĕ сире тепĕр практикăллă задача пирки асăрхаттарасшăн. Хальхи вăхăтра тĕнчери халăхсем хушшинчи çыхăнусем вăйлăн аталанса пынине эсир пĕлетĕр. Çав çыхăнусем çамрăксем енĕпе те аталанса пыраççĕ. Эпĕ хамăрăн çамрăксене, комсомолецсене чикĕ леш енчи çĕршывсенчи халăхсен йăлисемпе, культурипе, уйрăмлăхĕсемпе ытларах паллаштармалла тăвасшăн. Комсомолецсем хушшинче ют çĕршыв чĕлхисене пĕлекенсем ытларах пулни уйрăмах кирлĕ.

Юлташсем, миллионшар комсомолец-çамрăк çынсем геройла вăй хурса ĕçленипе комсомол çак пысăк наградăна илме тивĕçлĕ пулчĕ. Хамăрăн тĕрĕс ĕçшĕн вĕсем фронтсенче те, тылра та вăя хĕрхенмесĕр кĕрешни çинчен эпĕ каларăм. Çав тава тивĕçлĕ ĕçсен тӳпи комсомолăн чаплă ывăлĕсен, советлă Тăван çĕршывшăн хăйсен пурнăçĕсене панăскерсен, йышне те тивет. Çав çынсем хăйсем политика тĕлĕшĕнчен çитĕнсе çитнине, хăйсен организациллĕ опытне, кĕрешӳри искусствине, пысăк патриотизмне, совет халăхне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕç, вĕсем пĕтĕм тĕнче умĕнче совет çыннисен çӳлте тăракан моральне кăтартса пачĕç. Сталин юлташ комсомолшăн, çамрăксемшĕн тăтăшах тăрăшса пыни мĕн тери пуян çимĕççем кӳнине халĕ кашни курса тăмасть-и-ха ĕнтĕ!

Эпĕ, юлташсем, çапла шутлатăп: комсомолецсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çитĕнтернĕ паха традицисене чыслăн упраса тăрĕç тата малалла ӳстерсе пырĕç. Çав традицисемпе пирĕн çамрăксем, комсомолецсемпе комсомолкăсем вĕренсе пырĕç.

Комсомола наградăсем пани яланах пирĕн çĕршыв пурнăçĕнчи историллĕ паха тапхăрсемпе çыхăнса тăнă. Юлашки награда Отечественнăй вăрçă эпопейипе, пирĕн çĕнтерӳпе çыхăннă. Историллĕ пур тапхăрсенче те комсомол хăй умне лартнă задачăсене яланах чыслăн пурнăçа кĕртсе пынă. Умра тăракан ĕçсене, пирĕн государство аталанăвĕн халиччен хи тапхăрĕсенчи пекех, ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымашкăн сире ырă сунма ирĕк парсамăрччĕ. **(Пурте ура çине тăраççĕ, нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).**

СССР Совнаркомĕнче

СОВЕТ АРМЕНИНЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН АРМЯНСЕМ ТАВРĂННА МАЙ ТУМАЛЛИ МЕРОПРИЯТИСЕМ ÇИНЧЕН

Ют çĕршывсенче пурăнакан армянсем Тăван çĕршыва—Совет Арменине таврăнма ирĕк пама ыйтнине, çавăн пекех тата Армян ССР-ĕнчи ертсе пыракан органсем ыйтнине шута илсе, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ют çĕршывсенчен Тăван çĕршыва армянсем таврăннă май тумалли мероприятисем çинчен уйрăм решени йышăннă.

Армян ССР Халăх Комиссарĕсен Советне ют çĕршывсенче пурăнакан армянсене, вĕсем Тăван çĕршыва таврăнма кăмăл тăваççĕ пулсан, Тăван çĕршыва таврăнассине организацилеме ирĕк панă. Çавăн пекех тата Тăван çĕршыва таврăнакан армянсене çуртйĕр туса кивçен укçа парса пулăшма хушнă. Çав кивçен çуртйĕр хакĕн 50 процентĕ чухлĕ пулма пултарать.

Ют çĕршывсенчен ССР Союзне таврăнакан армянсене хăйсен пурлăхне илсе килнĕшĕн таможня пошлинине илессинчен хăтараççĕ. (ТАСС).

Çĕрпӳ районĕ IV-мĕш кварталти финанс планне срокчен тултарчĕ

Çĕрпӳ районĕнчи финанс работникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса тата 1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне тултармалли уйăхлăха активлăн хутшăнса, çак кварталти финанс планне срокчен тултарчĕç. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район укçа-тенкĕ пухмалли кварталти плана, пĕтĕмĕшпе илсен, 101 процент, налог тӳлевĕсем тăрăх 119,4 процент, перекет кассисем тăрăх 86 процент, заем укçи пухас тĕлĕшпе 100 процент тултарнă. Халĕ налогсемпе страховани енĕпе районăн нимĕнле парăм та çук.

Ытти районсемпе хуласенчи финанс работникĕсен, перекет кассисемпе госстрах работникĕсен Çĕрпӳ районĕнчи финанс работникĕсенчен пример илсе, IV-мĕш кварталти финанс планне çывăх кунсенчех тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

ПӲРТ ЛАРТСА ПАНĂ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Саваçсырмари «Новое хозяйство» колхоз членĕн В. Петровăн ывăлĕ Е. Прокопьев майор фронтра вилнĕ. Халĕ Петрова пĕччен пурăнать, унăн куçĕ курмасть. Колхоз правленийĕ Петровăна пур енчен те пулăшу парать. Кăçал колхоз вăйĕпе ăна çĕнĕ пӳрт лартса панă.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ĔÇ ДЕКАБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă
1. Йĕпреç	100,0	16. Çĕрпӳ	95,3
2. Первомайски	100,0	17. Калинино	94,9
3. Шăмăршă	100,0	18. Шăхасан	94,6
4. Чкаловски	98,9	19. Сĕнтĕрвăрри	93,3
5. Куславкка	97,9	20. Чурачăк	93,2
6. Канаш	97,3	21. Хĕрлĕ Чутай	93,0
7. Октябрьски	96,5	22. Красноармейски	92,8
8. Шупашкар	96,5	23. Сĕнтĕр	92,5
9. Вăрмар	96,4	24. Кувакино	90,2
10. Елчĕк	96,1	25. Çĕмĕрле	89,6
11. Вăрнар	96,0	26. Муркаш	89,2
12. Улатăр	95,9	27. Етĕрне	88,2
13. Элĕк	95,8	28. Советски	88,0
14. Ишлей	95,5	29. Тăвай	87,8
15. Комсомольски	95,4	30. Пăрачкав	86,6

Декабрь уйăхĕнче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана тултарар

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесси парти, совет, уйрăмах хатĕрлев организацийĕсен ответлă задачи пулса тăрать.

Красноармейски, Çĕрпӳ, Октябрьски районсем государствăна аш-какай памалли плана срокчен тултарчĕç. Республикăри колхозсем 1945 çулта государствăна аш-какай памалли хăйсен обязательствисене пурнăçласа, 1946 çулшăн 18.000 пăт аш-какай панă. Государствăна срокчен аш-какай парса татас тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Сĕнтĕр, Елчĕк, Тăвай, Муркаш, Советски, Элĕк тата Етĕрне районĕсем те лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем çулталăкри плана 86—96 процент тултарнă.

Чылай районсем сĕт-çу хатĕрлемелли çулталăкри плана тултарма çывхараççĕ. Вĕсен шутне Çĕрпӳ, Шупашкар, Красноармейски, Октябрьски, Сĕнтĕр, Вăрмар тата ытти районсем те кĕреççĕ. Вăрнар, Красноармейски, Муркаш, Октябрьски, Çĕрпӳ, Чурачăк тата Тăвай районĕсем çăм памалли çулталăкри плана тултарнă.

Анчах та выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене хатĕрлес ĕç пур районсенче те лайăх пырать теме çук-ха. Уйрăмах государствăна аш-какай парас тĕлĕшпе Пăрачкав районĕ юлса пырать, çак район плана пурĕ те 35,4 процент кăна тултарнă. Кувакино, Йĕпреç, Шăмăршă, Чкаловски районĕсем те плана 51—63 процента çити кăна тултарнă.

Çак районсем юлса пыни чăн малтанах колхоз руководителĕсемпе совет тата хатĕрлев органĕсенче ĕçлекенсем ответлăха туйса ĕçлеменнинчен килет. Акă, сăмахран, Шăмăршă районĕнчи «Красная звезда» колхоз государствăна сĕт парса татман вăхăтрах, фермăри ĕнесенчен суса илнĕ 3.500 литр сĕтрен 1900 литрне урăх çĕре салатса пĕтернĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та ирттерсе тултарнă, çапах та государствăна аш-какай парса татман. Шăмăршă районĕнчи нумай колхозсенче государство умĕнчи обязательствăна парса татичченех выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене салатса пĕтереççĕ. «Сталь» колхозра 4.000 литр, «Правда» колхозра 3.100 литр, «Кзыл-юл» колхозра 2.800 литр. Сталин ячĕпе тăракан колхозра 2.900 литр сĕте кирлĕ-кирлĕмар çĕре салатса пĕтернĕ, çав вăхăтрах çав колхозсем пĕри те государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçламан. Кунта государство обязательствине вăхăтра тултарма тăрăшмаççĕ. Ял Совет председателĕ Винайкин, колхоз председателĕ Космовский, ял Совет секретарĕ Исаева тата ыттисем те государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татман çынсен списокĕнче тăраççĕ.

Обязательствăсене пурнăçлас ĕçри дисциплинăна йăвашлатнине пула, Хатĕрлев комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ кирлĕ пек ĕçлесе пыманнине пула Шăмăршă районĕ государствăна сĕт-çу памалли плана пурĕ те 33 процент кăна тултарнă.

Çăм тата тир хатĕрлесси те Шăмăршă, Кувакино, Пăрачкав, Чкаловски районĕсенче юлса пырать. Шăмăршă районĕнчи «Заготживсырье» уполномоченнăйĕ Савельев юлташ ĕç тăвас вырăнне вăхăта ĕçкĕре ытларах ирттерет.

Советпа хатĕрлев организацийĕсен тата колхоз руководителĕсен обязательство тăрăх парса татман выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене декабрь уйăхĕнче парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Халĕ Хатĕрлев комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсем килес çула валли колхозсене, колхозниксене тата уйрăм хуçалăхсене выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсем параççĕ. Çак ĕçпе усă курса, кам мĕн чухлĕ тата мĕн тӳлемеллине тĕплĕн тĕрĕслемелле тата государство умĕнчи парăмсене пĕтерессишĕн кĕрешмелле. Çакă ĕнтĕ ял Совет тата хатĕрлев организацийĕсен чыслă тивĕçĕ пулса тăрать.

Н. ШАШУРИН.

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

КОМСОМОЛЕЦСЕМПЕ ÇАМРĂКСЕН ТУХĂÇЛĂ КОК-САГЫЗ ТУСА ИЛЕС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН БРИГАДИСЕМПЕ ЗВЕНИСЕН 1945 ÇУЛХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ

Тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăва 801 звено тата бригада хутшăннă.

Социализмлă ăмăртура Красноармейски, Канаш тата Шăхасан районĕсенчи çамрăк каучуководсем лайăх тĕслĕхсем кăтартнă. Кок-сагыз тымарне планпа пĕр гектар çинчен 4 центнер туса илмелле пулсан, Красноармейски районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем 15 центнер туса илнĕ.

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ комсомолецсемпе çамрăксен пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕнче Красноармейски районĕнчи «Красный Борденер» колхозри **Раиса Петрова** ертсе пыракан бригада мала тухнă тесе йышăнса ăна 3.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Иккĕмĕш вырăна Шăхасан районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри **П. Н. Яковлев** бригади, Красноармейски районри «Янмурзино» колхозри **З. А. Афанасьева** тата «Красный восток» колхозри **Н. Е. Жукова** бригадисем йышăннă. Çак бригадăсене кашнине 1.500-шер тенкĕ укçа памалла тунă.

Виççĕмĕш вырăна Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозри **А. Е. Егорова** звени, «Малалла» колхозра **П. П. Павлова** бригади, «Красное Сормово» колхозри **П. И. Иванов** бригади, Ильич ячĕпе тăракан колхозри **К. Ф. Федорова** бригади тата Войков ячĕпе тăракан колхозри **В. В. Хлебнова** бригади йышăннă. Çак бригадăсемпе звеносене кашнине 1.000-шер тенкĕ укçа памалла тунă.

1945 çулта пысăк тухăçлă кок-сагыз тымарĕ туса илес тата кок-сагыз вăррине пухса кĕртес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн секретарьне **Н. Г. Скворцова** 500 тенкĕ, ВЛКСМ Обкомĕн хресчен çамрăкĕсен отделĕн заведующине **Т. А. Табаковăна** 400 тенкĕ, Красноармейски районри «Красное Сормово» колхозри комсомол организацийĕн секретарьне **У. К. Кириллована**, «Красный восток» колхозри комсомол организацин секретарьне **И. Д. Димитриева** тата çак колхозри бригадира **А. П. Петровăна**, «Янмурзино» колхозри комсомол организацин секретарьне **С. И. Ильина** тата çав колхозри звеньевоя **М. А. Артемьевăна**, «Красная звезда» колхозри бригадира **К. К. Кириллова**, «Красный Борденер» колхозри звеньевойсене **Н. Т. Трофимовăпа С. Т. Трофимова** 250-шар тенкĕ укçа парса премилеме йышăннă.

ВКП(б) Красноармейски райкомĕн пĕрремĕш секретарьне **А. Г. Григорьева**, ВКП(б) Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарне **А. Г. Долгова**, ĕççынни депутачĕсен Красноармейски Райсовет председательне **В. О. Осипова**, ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн секретарьне **Н. Г. Скворцова**, «Росткаучукăн» Красноармейски районри хатĕрлев пункчĕн заведующине **А. Н. Николаева**, «Росткаучукăн» Канаш районĕнчи хатĕрлев пункчĕн заведующине **Д. К. Корнилова**, Красноармейски районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономне **Р. А. Архипова**, Канаш районĕнчи çĕрĕç пайĕн главнăй агрономне **В. Лаптева**, Красноармейски районри çĕрĕç пайĕн каучуковод-агрономĕсене **Е. П. Апполоновăна, Е. И. Ивановăна, Е. А. Андреевăна**, Красноармейски районри «Красный Борденер» колхоз председательне **М. П. Петрова**, «Янмурзино» колхоз председательне **Н. Т. Тимофеева**, «Красный восток» колхоз председательне **А. В. Сорокина**, «Малалла» колхоз председательне **М. С. Степанова** СССР Резина Промышленность Халăх Комиссариатне вĕсене «социализмла ялхуçалăх отличникĕ» значокпа наградăлама тăратнă.

ВЛКСМ Обкомĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Çĕрпӳ, Первомайски, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе ВЛКСМ райкомĕсем тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен звенисен, бригадисен социализмлă ăмăртăвне сахалĕксĕр ертсе пынине палăртнă.

Çимĕç йывăççисене лайăх хĕл каçарар

Кăçал пирĕн республикăри чылай колхозсем сад пахчисем тупĕç, пиншер тĕп улмуççи тата ытти çимĕç йывăççисем те лартрĕç. Иртнĕ çулсенче тата кăçал кĕркунне лартнă йывăççене хĕллехи сивĕсенчен сыхласа хăварасси питĕ паха ĕç пулса тăрать. Сад пахчи лайăх çитĕнтĕр тесен, ăна çулахи вăхăтра кăна мар, хĕлле те лайăх пăхса тăмалла. Чи малтанах йывăççене сивĕрен сыхласа хăварасси питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Кăçал лартнă йывăççемшĕн çанталăк ытла та начар тăрать. Кăрхи кунсем вăрăм пулмарĕç, çумăрлă çанталăк хыççăнах сивĕсем пуçланчĕç, çамрăк йывăççене сивве хăнăхма май килмерĕ. Çакă вăл питĕ сиенлĕ, мĕншĕн тесен сивве хăнăхман йывăççем сивĕпе шăнса пĕтме пултараççĕ.

Çавăнпа та çĕрĕç работникĕсем, агрономсем, колхоз полеводчĕсемпе садоводсем умĕнче халĕ улмуççисемпе ытти çимĕç йывăççисене сивĕпе шăнса пĕтесрен сыхласа хăварасси паянхи ĕç пулса тăрать.

Сад пахчинчи йывăççене сыхласа хăварас тесен, мĕн тумалла-ха? Чи малтанах йывăç тунисене улăмпа, хăмăшпа, чăрăш турачĕсемпе е ытти çавăн пек япаласемпе чĕркемелле тата ăна лайăх сыхса хăвармалла. Çапла туни сивĕрен кăна мар, мулкачсенчен те сыхлама май парать. Йывăç тунисене чĕркенĕ хыççăн айккинчи юра пухса улмуççи тымарĕ тĕлне купаламалла. Йывăç тĕпĕ тавра тата тымар çине ăшă çанталăкра çунă юра купаласа ăна таптаса хытарас пулать. Ку вара йывăç тымарне сивĕрен сыхланипе пĕрлех, шăшисем тата ытти çавăн евĕрлĕ чĕрчунсем йывăç тĕпне кышласа сиенлесрен те сыхласа хăварать.

Улмуççи кутне хĕл каçиччен 2—3 хут юр купалас пулать. Сад пахчинче юр тытса хăварни паха ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл йывăç тымарĕсене сивĕпе шăнса пĕтесрен сыхланипе пĕрлех, унта нӳрлĕх тытса хăварма та май парать. Юр тытнă вырăнта, йывăç тунисем аванса е кукăрălса ан пĕччĕр тесе, кĕркуннеренех çамрăк йывăç туни çумне шалça лартса ун çумне йывăçа сыхса хумалла пулнă, анчах апла туман пулсан, халĕ хытăрнă юр çине те пулин шалça лартса ун çумне çамрăк йывăç тунине çыхса çирĕплетмелле. Сад пахчисенчи çамрăк йывăççен хушшине юр лартăр тесен, сад пахчи хĕррипе çил ытларах вĕрекен енчен юра чавса купалас пулать. Юр куписене йывăç тĕпĕсенчен 2 метр аяккарах тумалла. Юр куписен çӳллĕшĕ 30—40 сантиметр пулмалла. Хĕл каçиччен юр хĕвнĕ май, çак купасен çӳллĕшне 50—60 сантиметра çитерме пулать.

Çак пысăках мар мероприятисене туни те çамрăк улмуççисене тата сад пахчинчи ытти йывăççене шăнса пĕтесрен сыхласа хăварма май парать.

Колхозсенчи садоводсен хĕллехи вăхăтра та сад пахчисенче час-часах пулмалла. Унта выльăх-чĕрлĕх, мулкачсем пырса сиен тăвасран сыхласа тăмалла.

Р. ОСАНОВ.

ТУХĂÇЛĂ СУХАН

Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра пахчаçимĕç бригадирĕ пулса Немаков юлташ 8 çул ĕçлет. Çак вăхăтра вăл кашни çулах тухăçлă пахчаçимĕç туса илнĕ. Хăйне шанса панă ĕçе лайăх туса пынăшăн Немаков юлташа кăçал правительство «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăланă.

Кăçал та Немаков юлташ тухăçлă пахчаçимĕç туса илнĕ. Уйрăмах сухан пысăк тухăçлă пулнă. Кунта пурĕ 20 тонна сухан туса илнĕ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

Ноябрĕн 30-мĕшĕнчи каçхи лару

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн ноябрĕн 30-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Америка енчен айăплакансен представителĕ Эмин полковник свидетельтен Лахузен генерал-майортан малалла ыйтса тĕпченĕ.

Лахузен çапла каласа панă: Германин верховнăй командовани штабĕн общи отделĕн начальникĕ Рейнике генерал эпĕ пулнă канашлура çапла каларĕ: тыткăна лекнĕ вырăс çыннисене хаяррăн тыткаламалла, вĕсене йышлăн персе вĕлермелле. Çак шухăша мĕнпур офицерсен ăс-тăнне кĕртмелле, вĕсем хăйсем национал-социалистсен государствинче пурăннине час-часах туймаççĕ, терĕ. Эпĕ, тет Лахузен, Канарис адмирал хушнипе çапла калатăм: тыткăна лекнĕ совет çыннисене çавăн пек вĕлерни çинчен пĕлсен, красноармеецсем хытăрах хирĕç тăма пуçлĕç, терĕм. Манăн çак шухăша гестапо представителĕ Мюллер çиленсе сирсе ячĕ. Рейнике генерал Мюллер майлă пулчĕ. Çав канашлура тыткăна лекнĕ совет çыннисене мĕнле майпа сортлани çинчен калаçрĕç. Тыткăна лекнĕ совет çыннисене хăйне уйрăм командăсем сортланă. Вĕсем мĕнпур еврейсене, мĕнпур политработниксене тата мĕнпур интеллигентсене уйăра-уйăра илсе персе вĕлернĕ.

Эмин полковник ыйтăвне хирĕç свидетель çапла калать: мана çавăн çинчен тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсенче ĕçленĕ офицерсем официальнăй йĕркепе пĕлтерчĕç. Çакăн çинчен Германи çарĕнчи нумай офицерсем пĕлнĕ, тет. Свидетель тата тыткăна лекнĕ совет çыннисене клеме хума хушакан приказ пулнине çирĕплетсе парать. Çав çынсене вĕлермелли çинчен калакан приказа Германин верховнăй командованийĕн штабĕ панă, çав штаб пуçĕнче халь айăпланакан Кейтель тăнă.

Лахузен каласа панă тăрăх, вăл авиаци полковникĕнчен Ровельтен 1939 çултах çакăн çинчен пĕлнĕ: Германи авиацийĕ вăрçă пуçланиччченех Лондона, Ленинграда, Польшăна, Венгрие, Европăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайне самолет çинчен ӳкерсе илнĕ.

Эмин полковник, свидетельтен ыйтса, еврейсене Борисовкăра йышлăн вĕлерни çинчен официальнăй доклад пулнине палăртать. Çав документ çунман ещĕкре пулнă, анчах та вăл кăшт çуннă. Çав документăн фотоӳкерчĕкĕ пур. Эмин вăл документа трибунал ларăвĕнче вуласа пама сĕнет. Анчах та трибунал вăл сĕннипе килĕшмест.

Малалла трибунал председателĕ айăплакансен представителĕпе хӳтĕлекенсен представителĕсене свидетельтен ыйтса тĕпчеме сĕнет. Трибуна патне Совет Союзĕ енчен айăплакан юстици генерал-лейтенанчĕ Руденко пырса тăрать. Руденко свидетельтен ыйтса çакна палăртать: Германи командованийĕ Украинăри реакциллĕ националистсен чаçĕсене ятарласа вĕрентнĕ, вĕсене вăл тылра диверсиллĕ, провокациллĕ ĕçсем тума хушнă. Руденко тата çакна палăртать: СД командисем (Эйхерхайтсдинет—«хăрушсăрлăх службин» командисем) Крымра çуралса ӳснĕ çар çыннисене, тыткăна лекнĕскерсене, йышлăн вĕлернĕ. Руденко ыйтнине хирĕç свидетель тепĕр хут çапла калать: тыткăна лекнĕ совет çыннисене вĕлерме хушакан приказа Германи офицерĕсем нумайĕшĕ пĕлнĕ, тет.

Унтан свидетельтен Кейтеле хӳтĕлекен тата Шахта хӳтĕлекен Дикс ыйтаççĕ. Вĕсем ыйтнине хирĕç свидетель çапла калать: çавăн пек приказсем пулнипе генштаб членĕсем те нумайĕшĕ пĕлнĕ, тет. Совет судьи Никитенко ыйтнине хирĕç свидетель çапла калать: верховнăй командованийĕн штабĕ поляксене, еврейсене вĕлерсе пĕтерме хушни çинчен Риббентроп пĕлнĕ, тет.

Кĕске вăхăт хушши перерыв туса илнĕ хыççăн суд Гесса ăс-тăн енчен илсен суд тума юранипе юраманнине пăхса тухма пуçлать. Гесса хӳтĕлекен çапла калать: медицина экспертизи Гессăн тăнĕ çухални çинчен каларĕ, тет. Вăл судран çапла ыйтать: Гессăн ăс-тăнĕ пĕтнĕ пирки ăна суд тума чарăнмалла, иккĕмĕшĕнчен—Гесс ĕçне хăйсĕр пăхса тухмалла, виççĕмĕшĕнчен—трибунал çапах та Гесс ĕçне пăхма йышăнсан, Гессăн ăс-тăнне тĕпчесе пăхмашкăн паллă психиатрсене пухса çĕнĕрен экспертиза тумалла, тет. Хӳтĕлекен хăйĕн иккĕмĕш сĕнĕвне хăех хирĕç калать.

Çакăн хыççăн айăплакансен ячĕпе Руденко генерал, американецсен тĕп айăплаканĕ Джексон, акăлчансен тĕп айăплаканĕ Девид сăмахсем тухса калаççĕ. Вĕсем Гесса суд тума юранине кăтартса параççĕ (вĕсем пуринчен малтан совет врачĕсен экспертизи каласа панă тăрăх çапла калаççĕ), Гесса суд тума ыйтаççĕ. Акăлчансен айăплаканĕ Англи законĕсене илсе кăтартать, çав законсем тăрăх, çавăн пек чухне айăпланакана суд тумалла. Франци судьи де Фарбр Гесс юри çавăн пек тунипе туманнине пĕлесшĕн. Унтан хӳтĕлекенсем тепĕр хут тухса калаççĕ, вĕсем Гесс суд мĕнле пынине асăрхаса тăма пултарайманнине, ăна суд тума юраманнине кăтартма тăрăшаççĕ.

Çак ыйтăва вара трибунал икĕ сехете яхăн сӳтсе-явнă, ăна вăл Гесса хăварса ытти айăпланакансене пурне те кăларса янă хыççăн сӳтсе-явнă. Унтан трибунал председателĕ лорд Лоуренс çакăн çинчен Гесса хăйĕн шухăшне каласа пама сĕнет. Гесс хăйĕн заявленине вулаçа парать. Заявленире каланă тăрăх, вăл каçхи лару пуçланнă чухне хăйне хӳтĕлекене хут çырса панă, çав хут çине вăл хăйне сăмах калама ирĕк парсан, суд ĕçне хăвăртлатма май пурри çинчен каланă. Эпĕ, тет Гесс, çакăн пек каласа пĕлтересшĕн (эпĕ ун çинчен кăшт каярахпа пĕлтерме шутланăччĕ): мана çĕнĕрен тăн кĕчĕ, тăн пĕтнĕ тесе, эпĕ тактикăллă сăлтавсем пирки каларăм. Тĕрĕссипе илсен, мана пĕр япала çинчен тĕплĕнтерех шухăшлама çеç кансĕртерех, анчах эпĕ суд ĕçĕ мĕнле пынине сăнаса тăма, хама-хам хӳтĕлеме, свидетельсене ыйтусем пама е хама паракан ыйтусене ответлеме пултаратăп, тет.

Гесс çавăн пек каланă хыççăн суд тепĕр кунччен перерыв тунă.

Декабрĕн 1-мĕшĕнчи ирхи лару

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Суд председателĕ Гесса хӳтĕлекенĕ ăна суд тăвассине тепĕр вăхăта хăвармa ыйтни тĕлĕшпе Трибунал йышăннине каласа парать. Гесс хăй каланине шута илсе, Трибунал Гесс судра пулма пултарать, тесе йышăннă.

Тулашĕнчен пăхсан та Гессăн «ăсĕ таврăнни» курăнать. Вăл йĕри-таврари çынсемпе япаласем çине нимĕн те пулман пек пăхнă тастă кайса кĕнĕ. Гесс хăйне хăй тăрлавсăр çын пек тыткалама пăрахнă.

Свидетельсем тăрса калаçмалли вырăна Лахузен свидетель йышăнать. Унран ĕнерех ыйтса пĕлме тытăннăччĕ. Америкăн тĕп айăплаканĕ Джексон унран çапла ыйтать: «США-н çар-сывлăш флочĕн 50 офицерĕ 1944 çулхи март уйăхĕнче тыткăнри çар çыннисен лагерĕнчен тарнă пулнă. Вĕсене нимĕçсем тытса вĕлернĕ. Эсир çав офицерсене мĕнле вĕлернине пĕлетĕр-и?»

Лахузен çапла калать: вăл вăхăтра эпĕ фронтра пулнă, ун çинчен нимĕн те илтмен пулас. Айăплакан Джексон вара хăйĕн вырăнне пырса ларать.

Председатель свидетельрен хире-хирĕçле ыйтса пĕлме тытăнма сĕнет. Чи малтанхи ыйтăва Папена хӳтĕлекенĕ парать. Вăл вăрăм та ăнланмалла мар сăмахсем каласа свидетеле хăй хӳтĕлекен Папена майлă мĕн те пулин калаттарма тăрăшать. Питĕ асăрханулла та кăткăс ыйтусем парса вăл свидетеле: Гитлер тĕлĕшпе Папан хирĕçле позици йышăнса пынă, тесе калаттарасшăн. Свидетель те хăйĕн питĕ асăрханулла ответĕнче «Гитлер тĕлĕшĕпе Папен хирĕçле позици йышăнса пынине» хăй пĕлмени çинчен каласа парать.

Ун хыççăн свидетеле Кейтеле хӳтĕлекенĕ «темиçе ыйту» парать. Вăл свидетеле Кейтель тĕлĕшпе ĕнер каланисене çăмăллаттарасшăн. Ĕнер Лахузен Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем Польшăра диверсиллĕ ĕçсем тунинче, поляксемпе еврейсен интеллигенцине пĕтернинче Кейтель паллă вырăн йышăнса тăни çинчен каланăччĕ. Анчах та Лахузен паян та çапла калать: Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованин начальникĕ пулнă май Кейтель нимĕç çарĕсен преступникла ĕçĕсене хăй ертсе пынă.

Унтан хӳтĕлекен свидетельрен ыйтать:

— Сирĕн отделри офицерсен политикăллă шухăш-кăмăлĕ çинчен тата вĕсем нацизм çине мĕнле пăхни çинчен Кейтель хăçан та пулин ыйту лартнă-и?

— Ун пек ыйтусене вăл нумай лартнă,—тет Лахузен.—Кейтель çапла калатчĕ: верховнăй командованин штабĕнче нацизма парăннă тата ăна çав тери шанса тăракан офицерсем çеç ĕçлеме пултараççĕ.

Хӳтĕлекен çĕнĕ ыйту парать:

— Польшăра операцисем тумашкăн зондеркомандăсене («уйрăм командăсене») верховнăй командовани фюрер ирĕк пани тăрăх туман-и?

— Эпĕ Гитлер ирĕк пани çинчен илтмен,—тет свидетель.

— Çар чаçĕсене хирĕçлесех гестапопа хăрушсăрлăх служби Польшăри ĕçсене хутшăннине эсир астăватăр-и?

— Эпĕ ăна астумастăп,—тет Лухазен. Унтан хӳтĕлекенĕ свидетеле вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисене клеме çапни çичен аса илтерсе, çапла ыйтать: клеме çапмалли приказа улăштарас тесе Кейтель Гитлер патне юри кайнине пĕлместĕр-и? Лахузен «пĕлместĕп», тесе ответ парать.

— Пĕрреччен Канарис патне Жиро генералăн курьерĕ пырса Жиро генерал Франци таврăнма пултарать-ши, тесе ыйтнине астăватăр-и?—тет хӳтĕлекен.

— Пĕлместĕп,—ответлет свидетель.

Риббентропа хӳтĕлекенĕ те çавăн пек ыйтусемех парса Риббентропа пулăшма тăрăшать. Лахуэнран вăл çапла ыйтать:

— Вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисене клеме çапнине пĕлсен, Риббентроп фюрер патне кайнине тата вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисене çавăн пек тыткаланине эпĕ хирĕç тăратăп тесе Кейтеле каланине астăватăр-и? Çавна вăл сирĕн умăрта каларĕ-и?

— Çук, ун пек калаçу пулман,—тесе ответ парать свидетель.

Польшăри еврейсене вĕлерсе пĕтерни çинчен калаçма тытăнсан, Риббентропа хӳтĕлекенĕн ĕçĕ татах та ăнăçсăртарах пулчĕ. Свидетель çапла калать: Польшăри еврейсене вĕлерсе пĕтерес тĕлĕшпе Риббентроп Канариса кăтартусем панă, тет. Вара хӳтĕлекен Лахузенран ыйтать:

— Еврейсене вĕлерес тĕлĕшпе эсир Австри полицине сведенисем панă-и? (Вăл вăхăтра Лахузен Австри разведкинче ĕçленĕ). Австри законĕ тăрăх, çав сведенисене паманшăн сире хăвăра вĕлермелле пулнă.

—Вăл вăхăтра Австри прави пăрахăçа тухнă,—тесе ответ парать свидетель. — Унсăр пуçне тата çавăн пек сведенисене манăн çĕр пин ытла памалла пулнă.

Хӳтĕлекен Лахузена çакна аса илтерет: «Аншлюсс» хыççăн эсĕ Германие таврăннă та Германи разведкине ĕçе кĕме тăрса Гитлершăн тӳрĕ кăмăлпа ĕçлетĕп, тесе тупа тунă.

Лахузен çапла калать: манăн ку ыйту пирки калаçас кăмăлăм çук, анчах та манăн Германи разведкине ĕçе кĕме кирлĕ марччĕ, мĕншĕн тесен мана Канарис лайăх пĕлнĕ май, хăй патне сотрудника илесшĕнччĕ.

Шахта, Фриче тата Кальтенбруннера хӳтĕлекенсем те Лахузен свидетеле ыйтусем панă. Анчах та свидетель вĕсене майлă нимĕн те калама пултарайман.

Çакăн хыççăн хӳтĕлекенсем судран çапла ыйтнă: айăпланакансене свидетельсене тӳрех ыйту памалла тăвасчĕ, тенĕ. Ку таранччен айăпланакансем ыйтусене хӳтĕлекенсем урлă çеç пама пултарнă. Трибунал çапла йышăннă: айăпланакансен хӳтĕлекенсем пулсан, вĕсем свидетельсене хăйсем ыйту пама пултараймаççĕ, вĕсемшĕн хӳтĕлекенсем çеç ыйтса пĕлеççĕ. Айăпланакансен хӳтĕлекенсем пулмасан вара свидетельсене тӳрех хăйсем ыйту пама пултараççĕ.

Çакăн хыççăн ирхи лару хупăннă. Декабрĕн 1-мĕшĕнче Трибуналăн каçхи ларăвĕ пулмăн.

Çурçĕр Иранри лару-тăру çинчен

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Сирĕн корреспондент пĕлнĕ тăрăх, Иранăн ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви темиçе кун каялла Çурçĕр Иранри лару-тăру пирки Совет правительствине нота янă. Çав нотăра курд йăхĕсен руководителĕсен пĕр ушкăнĕ çинчен асăннă, çав руководительсем Иран Курдистанĕнче йĕркесĕрлĕх тунă пулать, вĕсене Совет территорийĕнчен пулăшса тăраççĕ пулать. Нотăра совет представителĕсем Иранăн çурçĕр районĕсенчен центрпа кăнтăрти районсене апат-çимĕç куçарма кансĕрлени çинчен каланă. Унта тата, нимĕнпе çирĕплетсе памасăрах, совет представителĕсем Иран влаçĕсене çурçĕрти районсенче жандармсемпе чиновниксене вырăна лартма кансĕрлени çинчен каланă. Темиçе провинцире Иран генерал-губернаторĕсем çуккишĕн те айăпа совет представителĕсем çине йăвантарма хăтланнă. Нотăра Иранпа Турци хушшинчи чикĕре Иранăн чикĕри хуралĕсем çукки çинчен каланă, çакăншăн та совет представителĕсене айăпланă пулмалла. Министерство хăйĕн нотинче тата çапла каланă: совет влаçĕсем Иранри суд ĕçĕсене хутшăнаççĕ, тенĕ. Анчах та ку тĕлĕшпе нотăра пĕр пример та кăтартса паман. Нотăра çурçĕрти провинцисенчи тĕрлĕ хуласемпе ялсенче, сăмахран, Мианэре, Марагински Останра тата ыттисенче те хирĕçӳллĕ ĕçсем пулни çинчен асăннă, вăл ĕçсене, Азербайджанри демократиллĕ партин деятелĕсем организациленĕ, тенĕ. Нотăра юлашкинчен Çурçĕр Иранри çав ĕçсем пирки айăпа «совет çар работникĕсем çине» йăвантарма хăтланнă. Министерство, çапла каласа, 1942 çулта виçĕ государство тунă Тройственнăй договора асăннă, Иранăн çурçĕрти провинцийĕсене кăнтăр енчен Иранăн çĕнĕ çарĕсемпе жандармерине илсе пырасси çинчен ыйту лартнă.

Çав нотăна ответлесе, Совет посольстви Иранăн ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине ноябрĕн 26-мĕшĕнче нота янă. Вăл унта Иран нотинче кăтартнă ыйтусем çине тĕплĕ ответ панă. Совет нотинче çапла каланă: Иранăн ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви совет представителĕсем Иранăн вырăнти влаçĕсен ĕçĕсемпе распоряженийĕсене хутшăнаççĕ тенине фактсемпе çирĕплетсе паман, çавăн пек калани тĕрĕс мар. Совет территорийĕнчен хăшпĕр курд йăхĕсене тата курдсен политикăллă уйрăм деятелĕсене пулăшаççĕ тени те пĕртте тĕрĕс мар. Çакă лайăх паллă: совет представителĕсем Голикендра жандармсем тытса хупнă çынсене пĕрне те ирĕке кăларма ыйтман (нотăра ыйтнă, тенĕ), совет представителĕсем Тавриз хулинче Иранăн тĕрме çурчĕ патнелле каякан çар хуралне тытса чарнă тени те тĕрĕс мар, ун пек япала пулман.

Совет органĕсем Иран гражданĕсене çурçĕрти провинцисене кайма кансĕрлеççĕ тесе калани тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен Иран гражданĕсене çавăн пек контроллесе тăман та, тăмаççĕ те.

Нотăра совет представителĕсем çурçĕрти провинцисен экономика пурнăçне хутшăнаççĕ тени—вырăнсăр каланă сăмах. Совет нотинче çакна астутарнă: хăйĕн союзникла тивĕçне асра тытса, Совет правительстви Совет Союзĕшĕн йывăр вăхăтра, 1943 çулхи май уйăхĕнче, Иран столицине Тегерана 25.000 тонна тулă ярса пулăшнă. Совет Союзĕн сутуилӳ организацийĕсем, хăйсен ытти таварĕсене Ирана турттарса пырса, вăрçă вăхăтĕнче те Иран халăхне таварсем парса тăрас ĕçе лайăхлатма пулăшнă.

Нотăра тата çапла каланă: Иранăн çурçĕрти пайĕнче генерал-губернаторсем, çавăн пекех тата Иранăн ытти чиновникĕсем çуккишĕн Совет правительстви, паллах ĕнтĕ, ответ тытма пултараймасть. Çав чиновниксене ĕçлеме лартнă вырăна илсе çитерес тĕлĕшпе Совет Союзĕн транспорт организацийĕсем Иран влаçĕсене яланах пулăшса тăнă, акă темиçе кун каялла кăна Совет посольстви Баят генерал-губернатора Тавриз хулине илсе çитерме самолет парас ĕçре пулăшнă.

Совет посольствин ответĕнче çапла каланă: Иранпа Турци хушшинчи чикке сыхлаçа тăрас ыйтăва министерство пĕртте объективно çутатса памасть. Иран Совет Союзне темиçĕ хут та çакăн çинчен пĕлтернĕччĕ: Иранпа Турци хушшинчи чикке Иран хуралне вырнаçтарас ĕç пирĕншĕн питĕ йывăр, тенĕччĕ; Совет енĕ çав чикке хураллама темиçе хут та çине тăрсах сĕннĕ пулин те, Иран хăй вăхăтĕнче вăл чикке сыхлама килĕшмерĕ. Çавăнпа министерство Иранпа Турци хушшинчи чикĕре жандарм хуралĕсем çукки пирки каланине тĕрĕс тесе йышăнма çук.

Совет представителĕсем Иранăн суд ĕçне хутшăнаççĕ тени, Иранăн айăплă гражданĕсене тивĕçлипе наказани пама кансĕрлеççĕ тени хăйĕн тĕрĕсмарлăхĕпе тĕлĕнтерет. Совет посольствин нотинче çапла каланă: совет çарĕсем вырнаçнă районра Иранăн вырăнти влаçĕсем час-часах преступниксене шыраса тупма кансĕрленĕ, вырăнти суд органĕсем çав районра йĕркепе канăçлăха пăснă çынсене, Совет Союзĕн çар пурлăхне çаратнă çынсене, Совет Союзĕн çар служащийĕсене вĕлернĕ çынсене те час-часах тӳрре кăларнă е вĕсем тĕлĕшпе питĕ çемçе приговорсем йышăннă. Апла пулсан та, Совет Союзĕн çар представителĕсем Иранăн суд ĕçĕсене хутшăнас çулпа кайман, вĕсем совет гражданĕсемпе учрежденийĕсен интересĕсене Иран законĕсем тăрăх хӳтĕленĕ. Паллах ĕнтĕ, совет представителĕсем уйрăм совет представителĕсемпе çар çыннисем тĕлĕшпе пысăк преступленисем тунă иранецсене Иран сучĕсем мĕнле йĕрлесе тĕпченипе интересленмесĕр тăма пултарайман, анчах та çакă Иранăн суд ĕçĕсене хутшăнни пулать тесе калама çук.

СССР посольстви çапла каланă: Çурçĕр провинцисенчи хирĕçӳллĕ ĕçсем çинчен Иран нотинче калани тĕрĕссине Посольство аллинчи материалсем çирĕплетсе памаççĕ. Кирек мĕн пулсан та, Иранăн çурçĕрти провинцийĕсенчи ĕçсем, политикăллă партисен ĕçĕсемпе çыхăнса тăраканскерсем, Иранăн хăйĕн шалти ĕçĕсем пулса тăраççĕ. Совет представителĕсемпе совет çар влаçĕсем çурçĕр провинцисенчи политикăллă пурнăçа хутшăнман та, хутшăнмаççĕ те. Çавăнпа та çав ĕçсемшĕн ответлăха Иран органĕсем çинчен илсе «совет çар работникĕсем» çине йăвантарма хăтланнине Совет правительстви татăклăн сирсе янă, çав работниксем вăл ĕçсемпе пĕртте çыхăнман.

Министерство Тройственнăй договора асăннă пирки Посольство çапла каланă: 1942 çулта тунă çав договора Совет Союзĕ пĕр пăркаланмасăр çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пырать. Çавăнпа пĕрлех Посольство çакна палăртса панă: Иран территорийĕнче йĕрке тытса тăрас тĕлĕшпе çав договора Иран пур чухне те пурнăça кĕртсе пыман. Çар отрячĕсемпе жандарм отрячĕсен хăшпĕр уйрăм представителĕсен ĕçĕсем хăйсем каякан районсенче йĕркелĕхпе канăçлăх тума пур чухне те пулăшман, çакăн çинчен пĕлтĕр Иран правительствине каласа панăччĕ. Юлашки вăхăтра Иранăн жандарм влаçĕсен уйрăм представителĕсем Çурçĕр Иранра, йĕркелĕхпе канăçлăх тăвас вырăнне йĕркесĕр хăтланса, час-часах вырăнти халăхпа хирĕçнĕ.

Министерство Иранăн çурçĕрти провинцийĕсене Иранăн çĕнĕ çарĕсене илсе пырасси çинчен каланине илсен, Совет посольстви хăйĕн ответĕнче Иран правительствине çакăн пирки асăрхаттарнă: Иранăн çурçĕрти районĕсене Иранăн çĕнĕ çарĕсене илсе пынă пирки Иран правительствин те, Совет правительствин те хирĕçмелле ан пултăр тесе, Совет правительстви хальхи вăхăтра унта çĕнĕ çарсем илсе пыма кирлĕ мар тесе шутлать. Çакна шута илес пулать: Иранăн унта халь тăракан яланхи çар чаçĕсемпе жандармерийĕсĕр пуçне çав района тата çĕнĕ çарсем илсе пырас пулсан, Çурçĕр Иранра йĕркесĕрлĕхсем сиксе тухма пултараççĕ, юн та тăкăнма пултарать, çавăнпа вара, йĕркене тата совет гарнизонĕсен хăрушсăрлăхне сыхлас тесе, Совет правительствин Ирана хăйĕн çĕнĕ çарĕсене илсе пымалла пулса тăрать. Анчах Совет правительстви Ирана çĕнĕ совет çарĕсене илсе пымалла ан пултăрччĕ, тет, çавăнпа та Иранăн çурçĕрти провинцийĕсене Иранăн çĕнĕ çарĕсене хальхи вăхăтра илсе пыма кирлĕ мар, тет.

СОВЕТ ФУТБОЛИСЧĔСЕМ БОЛГАРИРЕ ÇĔНТЕРНĔ

СОФИЯ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 1-мĕшĕнче София хулинчи «Юнак» ятлă стадионра советсен «Торпедо» ятлă команди болгарсен «Локомотив» командипе футболла вылянă. Футбол вăййине курма 30.000 çын ытла пынă. Футбол вăййин судьи болгар çынни Тодор Стоянов пулнă. «Торпедо» футболисчĕсем иккĕмĕш минутрах болгарсен хапхине пӳске çапса кĕртнĕ. Вăййăн пĕрремĕш пайĕнче «Торпедо» футболисчĕсем «Локомотив» футболисчĕсен хапхине икĕ хутчен пӳске çапса кĕртнĕ, «Локомотив» футболисчĕсем «Торпедо» футболисчĕсен хапхине пĕр хут çапса кĕртнĕ.

Вăййăн иккĕмĕш пайĕнче совет футболисчĕсем тата тепĕр хут çапса кĕртнĕ.

Çапла вара вăйăра совет футболисчĕсем çĕнтернĕ, вĕсем болгарсен хапхине виçĕ хутчен пӳске çапса кĕртнĕ, болгарсем совет футболисчĕсен хапхине пĕр пӳске çапса кĕртнĕ.

АНГЛИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН 18-МĔШ СЪЕЗЧĔ ХУПĂННĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Англири коммунистсен партийĕн 18-мĕш съезчĕн юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура чылай резолюцисене сӳтсе-явнă тата вырăнти организацисем сĕннĕ тӳрлетӳсене пăхса тухнă. Вĕсене нумайĕшне сӳтсе-явма съезд партин Центральный Комитетне панă.

Ун хыççăн съезд секретарĕн докладне итленĕ те ăна çирĕплетнĕ.

Англири коммунистсен партийĕн çĕнĕ Центральный Комитечĕ президиума пырса ларсан, съезд делегачĕсем вĕсене алă çупса саламланă. Съезда хупнă чухне Англири коммунистсен партийĕн Центральный Комитечĕн генеральный секретарĕ Гарри Поллитт юлашки сăмах каланă. Вăл Англири коммунистсен партине массăллă парти тăвассишĕн çине тăрса ĕçлеме чĕннĕ. Поллитт Англири коммунистсен партийĕн çак съезчĕ пĕтĕм тĕнчери лару-тăрура паллă вырăн йышăннине палăртса хăварнă.

Пĕчĕк фельетон

Остап Бендер хăраххи...

Остап Бендер ятлă аферист çынсене улталаса, миллионсем хыççăн чупса, темĕн тĕрлĕ усал ĕçсем тунине вулакансем астăваççĕ пулĕ. Илья Ильфпа Евгений Петров писательсем Остап Бендер çинчен икĕ кĕнекере сăнласа панă. Эпир кунта Остап Бендер хăраххи... Мизеровский ятлă çын çинчен кĕнеке мар, пĕчĕк фельетон çырса та пулин паллă тăвасшăн.

Асăннă аферист Остап Бендер, хăй темле хура ĕç тăвать пулин те:

— Эпĕ уголовнăй кодекса хисеплетĕп,—тесе калама юратнă.

Мизеровский вара апла мар. Вăл уголовнăй кодекс çинчен аса илме юратмасть, анчах хăйĕн ĕçне тăвать-тăватех.

Мизеровский «чапа» тухасси Вăрнарти вăрманпромхозра пуçланнă. Вăрнара вăл кăçалхи август уйăхĕнче пырса çитнĕ те, ăна çавăнтах вăрманпромхоз директорĕн подсобнăй хуçалăх тата кадрсем енĕпе ĕçлекен заместителĕ туса хунă. Штатпа вăрманпромхозра çавăн пек вырăн пулман та, анчах мĕнех вара вăл «штат» тени Мизеровскишĕн пулсан?

Икĕ кун пурăнать-и Мизеровский Вăрнарта, виçĕ кун-и, анчах ăна пĕр вырăнта ларни часах йăлăхтарать те, вăл ялсене тухса каять...

Чи малтан вăл Çарăклăри вăрман пунктне пырса çитет. Çитет те, хăйхискер, тӳрех... ĕçке тытăнать. Виçĕ кун хушши столовăйран тухмасăр кӳпсе буфетри эрехе ĕçсе ярать те, укçа тӳлесĕрех тухса каять. Мĕн укçи унта? Митя Мизеровский расписка çырса хăварать. Асли вĕт, ăна укçасăр та шанаççĕ!

Çакăн хыççăн Мизеровский Калинино районĕнчи Катеркасси ялне пырса çитет. Кунта Вăрнарти вăрманпромхозăн подсобнăй хуçалăхĕ пулнă иккен, Мизеровский ĕнтĕ уборка ĕçне «ертсе пыма» тытăнать. Ак хайхи подсобнăй хуçалăх шучĕпе ĕçкĕ пуçланать. Мухмăр пуса ăçтан кĕтĕр-ха уборка шухăшĕ? Çавăнпа та подсобнăй хуçалăхăн пĕр гектар çуръă çинчи вирĕ юр айнех юлать.

Подсобнăй хуçалăхра уборка пынă вăхăтрах Мизеровский Чалăм Кăкшăмри колхоза пырса çитет. Кунта вăл вăрманпромхозăн куçса çӳрекен двигательне, унпа пĕрле 600 килограмм горючи колхоза сутса ярать. Колхозра, паллах, чаплă ĕçкĕ пуçланать. Ятарласа така пусаççĕ, Чиркӳллĕ Кăкшăм ялĕнчен эрех йăтма колховниксене мобилизацилеççĕ. Лавкари пĕр пичке эрехе пĕр тумлам юлмиччен ĕçсе яраççĕ. Колхоз кассинчи укçа пĕтсен, колхозниксенчен «кивçен» илсе ĕçме пуçлаççĕ. Çак ялтан Мизеровский хăйĕн документсене çухатса хăварсах тухса каять.

Октябрĕн 20-мĕшĕнче вăл Малти Кăкшăмри «Красный кавалерист» колхоза пырса кĕрет. Колхоз председательне вутă сĕнет, вуттине автомашинăпах турттарса пама пулать. 150 кубометр вутта 1470 тенкĕ çинчен килĕшеççĕ. Мизеровский укçине кăсъене чикет. Çавăнтах колхоза вутă тиесе килме распоряжени çырать. Унта çапла каланă:

«Десятнику 49 квартала т. Димитриеву. Отпустите Малды-Кукшумскому колхозу 150 кубометров двухметровых дров. Расчет учинен...» Кăтартнă адреспа колхозран вутă илме каяççĕ: пĕрре çитеççĕ, иккĕ çитеççĕ... Димитриев десятнике нимпле те тытаймаççĕ. Юлашкинчен, аптăранă енне, Пинер вăрман пунктне çитеççĕ. Кунта акă мĕн паллă пулать: Мизеровский кăтартнă 49-мĕш квартал та, Димитриев десятник та ку вырăнта нихăçан та пулман. Вăл япала Мизеровский аферист пуçĕнче кăна пулнă. Çапла вара колхоз паян кун та вуттине те кураймасть, тӳленĕ укçине те каялла илеймест...

Октябрĕн 25-мĕшĕнче Митя Мизеровский Мăн Эльмене пырса çитет. Кунта вăл П. Козлов колхозник патĕнче хăналанса пурăнать, ăна каллех Димитриев десятникрен вутă илме «распоряжени» çырса парать.

Мăн Эльменрен тухсан çак аферистăн йĕрри çухалать, халĕ вăл пачах çухалнă теççĕ. Виçĕ уйăх хушши Мизеровский вăрманпромхоз директорĕн помощникĕ вырăнне йышăнса, аферистла ĕçсем туса, колхозсемпе колхозниксене лартса çӳрет. Чăн та Остап Бендер хăраххи ĕнтĕ!

Анчах пире çак историре урăххи тĕлĕнтерет: мĕнле майпа, кам пулăшнипе Мизеровский аферист Вăрнарти вăрманпромхоза пырса лекет-ха? Наркомлесăн кадрсен пайĕнче пире ку ыйтупа нимĕн те каласа параймарĕç.

— Мизеровские Вăрнара ĕçлеме яни çинчен Наркомлесра нимĕнле приказ та çук,—терĕç пире хирĕç кадрсен пайĕнче.

— Уйрăм çыру çырса янă пулĕ çеç ăна Вăрнара... Çырусне кам çырса яни те паллă мар...

Тупасчĕ-çке çав çыру авторне!

Еф. ВАКУЛА.

Ответлă редактор заместителĕ **Н. С. СТЕПАНОВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ял хуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00687 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.